Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çур аки вăй илсе пырать

# Акнипе çеç тулли кĕлетлĕ пулаймăн

***Çурхи кун çулталăк тăрантарать теççĕ, анчах çурхи уй-хир ĕçĕсене агротехникăна пăхăнса пурнăçламасан, çур аки тенипех кĕлечĕ-кĕлечĕпе тырăллă пулаймăн, тулли картиш выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеймĕн, экономикăн малтуртăмлă аталанăвне çирĕп никĕслеймĕн. Пăхăнатпăр-и-ха эпир агротехникăна? Çурхи уй-хир ĕçĕсене алăран каймалла çеç тумастпăр-и-ха? Çак ыйтусем çине хурав шыраса районти ӳсен-тăрансене сыхлас енĕпе ĕçлекен агрономпа Алексей Семенович СЕМЕНОВПА тĕл пулса калаçрăм.***

**– Сивĕрех тăнă çурхи кунсем тинех ăшăпа ылмашăнчĕç. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнчех хире тухнă çĕр ĕçченĕсем паян тулли вăйпа ака-сухара тимлеççĕ. Яра кунах уй-хирте çĕр хатĕрлекенсемпе ака агрегачĕсен шавĕ тăрать. Юнашар ĕшнере вара шăпчăк юрлать. Алексей Семенович, эсир пурнăçлакан ĕçе пĕлсе тăнăран паян мана пĕр ыйту канăç памасть: çур аки вăл тырă-пулă акса хăварнипе çеç вĕçленмест вĕт, ăна пăхса ӳстересси те çур акиренех пуçланать. Çапла мар-и? Ку тĕлĕшпе вара хуçалăхсенче ĕç-пуç еплерех пырать?**

– Сирĕн ыйтăвăн тĕшшине ăнлантăм. Тĕрĕсех, çĕре варăнтарнă вăрлăхран тӳрех пучах çĕкленмест. Ăна валли çĕр ĕçченĕн çу каçа пайтах ĕçлемелле. Агротехника ĕçĕсем вара ырана хăварнине йышăнмаççĕ. Малашлăх пирки шутлакан çĕр ĕçченĕн паян хире илсе тухакан вăрлăха пĕтĕмпех имçамласа акмалла. Çакă вăл пулас тухăçпа тӳрремĕн çыхăннă ĕç. Акмалли вăрлăха имçамлассине кăçал "Восток", Чкалов яч. хис., "Рассвет", "Сеятель", Ленин яч. хис., Ильич яч. хис. (ку хуçалăхсем вăрлăха 100 проценчĕпех имçамланă та ĕнтĕ, "Восток" хуçалăх вара иртнĕ кунсенче пуринчен малтан акса та пĕтерчĕ), "Свобода", "Оринино", "Герой", Чапаев яч. хис. хуçалăхсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Çав вăхăтрах Е. Андреев яч. хис. хуçалăх çуртрисене 60 процент, "Передовик" кооператив 24 процент акрĕç пулсан та, имçамласси çине пӳрне витĕр çеç пăхрĕç.

**– Маларах акнă вăрлăх шăтма та пуçларĕ. Апла пулсан çум куракĕпе кĕрешмелли вăхăт та инçе мар.**

– Тĕрĕсех калатăр. Калчасем симĕсленме пуçличчен çум куракĕ вăй илет. Иртнĕ кĕркунне çĕртме сухи тăвайманран паян чылайăшĕ çĕре культиваци туса çеç акать. Кун пек ĕçленипе çум куракĕ аяла пулмасть, хăвăрт вăй илсе çĕкленет. Çавăнпа та пысăк тухăçшăн ĕçлесе çумпа кĕрешесси паян-ыран малти вырăна тухать. Çакна шута илсе хуçалăхсенче кая юлмасăр опрыскивательсем хатĕрлемелле, ядохимикатсем çителĕклĕ янтăламалла. Ытти культурăсемпе хутăш акман çуртрисене пĕтĕм лаптăк çинче гербицидсемпе пĕрĕхесси – çĕр ĕçченĕн умра тăракан тĕп тĕллевĕ. Çакна валли паянах ятарлă отрядсем йĕркелесси çинчен шутламалла, унта ĕçлекенсене ĕç условийĕсемпе тата хăрушсăрлăх техникипе паллаштармалла. Ку ĕçе хуçалăхри тĕп агрономсен ертсе-йĕркелесе пымалла.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Апрелĕн 18-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери музейсен кунĕ

# Иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук

Музейсен кун-çулĕ те Муркаш ен аталанăвĕнче пĕрлехи ĕçхĕлтен айккинче тăмасть. Районти кашни шкултах унăн пĕчĕк пайĕ хамăр пурнăçпа паллаштарать, иртни çинчен каласа парса малашлăх утăмсене палăртать. Паян районта пурăнакансенчен ытларахăшĕ Муркашри, Панклири историпе краеведени музейĕсенче, Калайкассипе Сосновкăри вăтам шкулсенчи хамăрăн иртнĕ пурнăçа анлăн кăтартса паракан пысăк музейсенче пулса курнах ĕнтĕ. Хамăр тăрăхăн истори алăкне уçса пăхни пуриншĕн те интереслĕ мар-и?

Мĕнле пурăнать-ха паянхи музей, мĕнпе сывлать вăл?

Пĕлтĕр райцентрта вырнаçнă историпе краеведени музейĕ Чăваш Республикин культура сферинчи инновациллĕ проектсен конкурсне хутшăнса ЧР Президенчĕн грантне тивĕçни кăçал вăл район администрацийĕн культурăпа архив ĕçĕсен пайĕпе пĕрле Раççей Федерацийĕ шайĕнчи çавăн евĕр конкурса хутшăнса та ырăпа палăрасса шантарать. Раççей шайне тухнă май пĕлтĕрхи проекта çитĕнекен ăрăва Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсен наци тумĕсемпе паллаштарассипе, халăхсем хушшинчи туслă хутшăнăва аталантарассипе иртекен "Пултран пасарĕн" уявне кăтартассипе анлăлатнă.



В. Даниловпа А. Скворцов музейри чăваш сурпанĕсен куравĕпе паллашнă самант.

Музейра кăçал ĕçленĕ чăваш сурпанĕсен куравĕнче ытти çынсемпе пĕрлех ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕпе В. Даниловпа ЧР Патшалăх Канашĕн аппаратĕнчи пай пуçлăхĕ А. Скворцов та пулчĕç. Вĕсен шухăшĕнче те музейсене аталантарасси пирки ырри кăна.

– Музейсен пĕлтерĕшĕ хамăр историпе çыхăннă. Иртнине пĕлмесĕр вара малашлăх çук. Çакна тĕпе хурса пирĕн çамрăк ăрăва хамăрăн иртнĕ кунçулпа çывăх паллаштарса аталантармалла. Çамрăксем хăçан мĕнле вăрçă пулнине, мирлĕ пурнăçа кам тата мĕнле хакпа сыхласа хăварнине, асатте-асаннесем ĕлĕкрех епле пурăннине аслисемпе тан пĕлсе воспитани илччĕр. Çакна куратăп та музейсен пĕлтерĕшĕнче, – терĕ районти историпе краеведени музейĕнче чăваш сурпанĕсемпе паллашнă чух ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Владислав Григорьевич Данилов.

– Чăваш сурпанĕ вăл – пирĕн асатте-асаннесен пурнăç аталанăвĕн картти. Мĕн ĕçленĕ вĕсем авалрах, тĕнче çине мĕнле пăхнă – çакна чăваш хĕйĕн тĕррисенче çырса хăварнă. Ăна пĕлсе тăрса пирĕн асаннесен алă ĕçĕсене вулама вĕренмелле, вĕсене шута хурса çамрăксене ыррине кăтартмалла, çак ĕçсен никĕсĕ çинче ачамăрсемпе мăнукăмăрсене воспитани памалла, чăвашлăха юратма вĕрентмелле. Çакна тăвайратпăр пулсан, музейсен ĕçне те тӳрре кăларатпăр, – сăмаха тăсрĕ Алексей Петрович Скворцов.

Умра Пĕтĕм тĕнчери музейсен кунĕ пулнине шута илсе районта музейсене аталантарассипе пысăк ĕç туса ирттернĕ Н. Л. Яковлева, Е. Е. Ерагина, Е.В. Романована, Т.З. Степанована тата ытти вуншар ĕçчене саламласа ырлăх-сывлăх сунатпăр.



Муркашри ачасен моделлĕ библиотекин пуçлăхĕ Елена Налимова, райцентрти историпе краеведени музейĕн директорĕ Елена Романова, чăваш наци музейĕн наука сотрудникĕ А. Степанова (сулахайран сылтăмалла) Муркаш енри музейсен аталанăвне пĕрлехи тӳпе хываççĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Кадетсем

# Тивĕçлĕ ăру ӳсессе шанатпăр



Лайăх лаша пуласси тихаран, ырă çын пуласси ачаран паллă. Çакна тĕпе хурса ĕçлет "Муркаш лицейĕ" муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕ. Ĕçлет тата çак ĕçе лицеистсен ашшĕ-амăшĕсемпе общественноçа активлă явăçтарать. Ахальлĕн пĕччен хулă хуçăлать тени тӳрре килĕ те...

Тирпейлĕх çине куллен пăхакан лицей вĕрентӳ ĕçне те самантлăха та кун йĕркинчен кăлармасть. Лицеистсем çуркунхехи каникулта пулнă уçă самантпа усă курса вĕрентӳ учрежденийĕн администрацийĕ апрелĕн 5-мĕшĕнче кăçалхи вĕренӳ çулĕнче уçăлнă кадетсен пĕрремĕш ушкăнĕн ĕçĕпе кăсăкланас тата çак юхăма малалла ăнăçлăрах аталантармалли вĕрентӳ çулне палăртас тĕллевпе районти ответлă ĕçченсен **(сăн ӳкерчĕкре)** çавра сĕтелне ирттерчĕ.

– Пирĕн тĕп тĕллев – Муркаш Енпе Чăваш Республикине, Раççее малалла сулăмлă аталантарма тивĕçлĕ ăру ӳстересси, ăна ырă енпе малтуртăмлă воспитани парасси, – терĕ тĕл пулăва уçса лицей директорĕ Н.Смирнов. – Иртнĕ çул Раççей Президенчĕн грантне çĕнсе илни пире вĕрентӳре çĕнĕ çулсем шырама хистет. Эпир çапла тăватпăр та. Акă, пĕлтĕр лицейра кадетсен пĕрремĕш ушкăнне вĕрентме пуçларăмăр. Çак ырă вăрлăх çĕнĕ çимĕç парса савăнтарасса кĕтетпĕр. Кадетсен ушкăнĕнчи 5 каччăпа 2 хĕр çар службин тата право ĕçĕ-хĕлĕн никĕсĕсене вĕренсе хăйсен пурнăçне Тăван çĕршыв сыхлавĕпе çыхăнтарма хатĕрленеççĕ. Вĕсене автоматпа паллаштарасси, пневматикăлла винтовкăна хăнăхтарасси, противогазпа ĕçлеме вĕрентесси малти вырăнта пулнине шута илсе хамăр харпăрлăха вĕсене е вĕсен макечĕсене туянтăмăр. Кадетсене лицей чиккинчен илсе тухса çар чаçĕсене, шалти ĕçсен пайне, ШĔМ академине, ОМОН базине т.ыт. те илсе тухса кăтартасси – умри тĕллев. Ырă хыпар утпа кайрĕ пулас: кăçалхи вĕренӳ çулне пирĕн кадет корпусне вĕренме килме 13 çамрăк заявлени пачĕç те ĕнтĕ.

– 9 класс пĕтерекен яшсемпе хĕрсем кадет пулма туртăнни пурнăçăн пур сферисем те çĕршыва юратакан пысăк пахалăхлă специалистсем ыйтнине çирĕплетет. Ку ĕç вара пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ лицейăн кун йĕркинче тăрать. Çĕршыв пысăк квалификациллĕ специалистсем ыйтнăран вĕрентӳ ĕçĕнче кадетсен теори пĕлĕвне практикăлла ĕçсемпе çывăхарах паллаштарни вырăнлăрах пулмалла. Çакăн чухне çеç вĕсем пурнăçа алă тупанĕ çинчи пек курса тăрĕç, хăйсем валли тĕрĕс çул суйласа илĕç, – терĕ районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.Макаров.

Кадетсен дисциплинине ӳстерме патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ И.Смирнов панă сĕнӳсем те вĕрентӳ ĕçĕнче усăллă пуласси пирки иккĕленӳ çук. Урокра вĕрентекен чĕннĕ хыççăн кадет çар çынни пек хурав пама вĕренни, аслисене çар уставĕнче пăхнă пек кĕтсе илсе ăсатма пултарни кадет ушкăнĕнче вĕренекенĕн ятне ӳстерĕ çеç.

Афганистанра службăра пулнă воин-интернационалистсен районти совечĕн председателĕ В. Киршев шухăшĕпе вара кадетсене 10-мĕш класрах тĕплĕ медицина тĕрĕслевĕ тумалла: патне çитсен сывлăх хавшакки çамрăка çапса ан хуçтăр.

Районти çар комиссарĕн заместителĕн шучĕпе кадетсен ушкăнĕнче вĕренекенсем валли ăçта-ăçта вĕренме кайма майсем пурри пирки маларахах кăтартса хунисем пулни те лайăх пулмалла.

**А. ПЕТРОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

01 хыпарлать, асăрхаттарать

# Кил хуçи паллă мар

Лăпкă вырăнта пурăнатпăр пулин те, пирĕнтен кашнинех вăл е ку асăрханусăрлăхпа тимлĕхе çухатнине пула тата çынсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманнине, вĕсене сĕмсĕррĕн пăснине кура "хĕрлĕ автан" хăратса-шиклентерсе тăрать. "Пушар хыççăн шыв кирлĕ мар", – теççĕ халăхра шахвăртса. Çакăнпа инкек ума тăрсан кашниех килĕшетпĕр, анчах унччен...

Çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла Ильинка ял тăрăхĕнчи Хунтăкасси ялĕнчен унта пушар тухни пирки тата пулăшу ыйтни çинчен хыпар çитрĕ. Пушарпа кĕрешме вырăна çийĕнчех "Волга" хуçалăхпа "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикин, 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн Мăн Сĕнтĕрпе Муркашри пушар машинисене кăлартăмăр. Хыпар каярах çитнипе тата çул инçе пулнипе, яла кĕме çул япăххипе кирлĕ пулăшу çийĕнчех çитеймерĕ... Ирĕке кайнă вут-çулăмра вара уйрăм çын харпăрлăхĕнчи кил-çурт тĕппипех çунса кайрĕ. Каламалла, çитнĕ пулăшу çил вăйлине пăхмасăрах çулăма кӳршĕ хуçалăхсем çине сарăлма памарĕ. Ку пушар сăлтавне тĕпчесси паян малалла пырать пулсан, асăннă хуçалăхăн хуçи кам пулни паллă мар-ха. Çакă вырăнсенчи ял тăрăхĕсен хуçасăр ларакан пушă çуртсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулмаллине, çу кунĕсем çитнĕ май ялсенче каçхи хуралсем тăратассине йĕркелемеллине ыйтать. Пĕрлехи асăрханулăх малта пулмалла.

**А. ИЗОНОВ,**
**районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн инспекторĕ.**

# Çулăмăн чĕлхи вăрăм

Чăваш "ӳкессе пĕлнĕ пулсан тӳшек сарăттăм" тени пушар хăрушсăрлăх правилисене куллен пăхăнса тămалли пирки те асăрхаттарать. Ахальлĕн... Кая юлсан...

Районта кăçал паянхи куна 13 пушар регистрацилерĕмĕр. Вĕсенче çĕршер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех виçĕ çын пурнăçĕ те вăхăтсăр татăлчĕ. Çак инкексем хыçĕнче мĕн чуль куççуль, мĕн чухлĕ çĕр çывăрман каçсем... Çапла ан пултăр тесен пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине малти вырăна тăратмалла. Çак йĕркерен пăрăнман пулсан Çĕньял Шурчари пĕрисен хуçалăхĕнче те майăн 1-мĕшĕнче пулса иртнĕ пысăк инкекрен пăрăнса иртме пулĕччĕ. Çак кун районти пушар чаçне инкек пирки пĕлтерни 17 сехет те 15 минутра çитрĕ. Ирĕке кайнă çулăмпа кĕрешме "Герой" хуçалăхăн икĕ пушар машинисĕр пуçне Муркашпа Мăн Сĕнтĕрти, "Оринино" хуçалăхпа "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикинчи пушар машинисене явăçтартăмăр. Анчах çиле хирĕç кĕрешсе çулăма аяккалла сарăлма çул памарăмăр пулсан та, пушар тухнă кил-хуçалăха инкекрен çăлса хăварма май килмерĕ.

Пушар сăлтавне тĕпчени вут-кăвар электропроводка юсавсăрринчен тухнине кăтартса пачĕ. Çак тĕслĕх çынсене килти электрохуçалăхсемпе питех те асăрхануллă пулмалли, ăна тĕрĕслесех тămалли пирки калать.

Майăн 2-мĕшĕнче тата уçă çулăмпа асăрханусăр пулнипе Çатракасси ял тăрăхĕнчи Очăкасси ялĕнчи пĕр хуçалăхра та "хĕрлĕ автан" килти хушма хуçалăхри сарая юрăхсăра кăларчĕ.

**А. КУЛИКОВ,**
**37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Пахчаçăна пĕлме

# Тавçăрулăх тата ăнăçу

**Кун вăрăмланнă май хуçалăхсенче çур аки ĕçĕсем вăй илчĕç. Кунпа пĕрлех ял çыннин пахчана тухмалли вăхăт та ĕçсене ырана хăварма ыйтмасть. Çакă ответлă тапхăр пулнине çĕр ĕçĕпе ĕçлекен кашни çынах питĕ аван ăнланать. Анчах çĕр ĕçĕнче те эпир пĕлмен вăрттăнлăхсем нумай-çке. Паянхи канашсем кунта пулăшу пулĕç. Акă:**

– хăяр йăранне хĕвел çаврăнăшĕ лартсан, хăяр тухăçлăхĕ ӳсет;

– çуркунне çĕрле тăм ӳкес хăрушлăх пур пулсан, каçхине йăрансене лайăх шăварăр;

– çĕр улми лартас вырăна кĕркунне çителĕклĕ тислĕк сапса хăварнă-тăк, шултрарах çĕр улми лартăр. Тислĕк сахал пулсан – вĕтĕрех çĕр улми кирлĕ, кун пек чухне вĕсене ретре çине-çинех лартса хăвармалла;

– улмуççипе чие йывăççисене пĕр-пĕринчен инçерех лартмалла, мĕншĕн тесен вĕсен тымарĕсем пĕр-пĕрне килĕштермеççĕ;

– улмуççи айне армути тата пилеш куракĕ лартсан, вĕсем йывăçа улма хурчĕ тапăнасран сыхлĕç;

– хăмла çырлисене хурт-кăпшанкă ан тапăнтăр тесен, чечек çуриччен тĕмсене табак тусанĕпе кĕл (1:1) хутăшне сапăр. Сапнă чухне çулçăсем нӳрĕ пулмаллине асра тытăр;

– тутăхнă кĕреçене хăйăрлă хутсăрах (наждак хучĕ), çурмалла каснă суханпах тасатма пулать;

– лартас умĕн çĕр улми вăрлăхне кĕл сапса "тусанлантарсан", тухăç палăрмаллах ӳсет;

– пиçес умĕн шыва кăштах уксус хушсан, çĕр улми кăвак тĕслĕ пулмасть;

– крахмал сортлă çĕр улми тăвар хушса пĕçерсен те саланса каять. Ун пек çимĕçе пĕçернĕ чух тăварланă хăяр е купăста шывĕ, е кăштах уксус хушмалла.

**"Сад и огород" журналтан.**